27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
25
ЮНКУН
211(6706) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ҫамрӑксене воспитани парасси— комсомолӑн хисеплӗ задачи

Совет ҫамрӑкӗсем ленинла-сталинла комсомола хӑйсен малта пыракан отрячӗ тесе шутлаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл кашни кунхи ӗҫре палӑрать. Комсомол организацийӗсем воскресник иртерес ҫӗ-и, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн мӗнле те пулин ҫӗнӗ юхӑм пуҫараҫҫӗ-и, — кирек хӑҫан та, комсомолецсемпе пӗрле, пиншер ҫамрӑксем ӗҫе хутшӑнаҫҫӗ.

Комсомол авторитечӗн иксӗлми ҫӑлкуҫӗ — комсомол большевиксен партийӗн шанчӑклӑ помощникӗ пулса тӑнинче, вӑл хӑйӗн пӗтӗм вӑйне тӑван ҫӗршыв интересӗсемшӗн кӗрешнӗ ҫӗре панинче. Комсомол организацийӗсем пӗрлӗхлӗ ҫемье пулни, унта ҫамрӑксем пӗр-пӗрне ӳсме, вӗренме пулӑшни ҫинчен совет ҫамрӑкӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та совет ҫамрӑкӗсен комсомола кӗрес туйӑмӗ те пысӑк. Предприятисемпе колхозсенчи пиншер ҫамрӑксем хӑйсен пурнӑҫне комсомолпа ҫыхӑнтарма ӗмӗтленеҫҫӗ.

Комсомолӑн, ҫамрӑксем хушшинчи хӑйӗн авторитетне ҫӗклесе пырас тата умра тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлас тесен, ВЛКСМ ретне ӳстерессишӗн куллен тимлӗн тӑрӑшмалла. Ҫамрӑксене политикӑпа техника пӗлӗвӗсене туянма пулӑшмалла, вӗсене комсомол ӗҫне активлӑн явӑҫтармалла. Ҫамрӑксене воспитани парасси, вӗсене тӑван ҫӗршыв тата халӑх ӗҫне чӗререн парӑнса ӗҫлеме вӗрентесси комсомолӑн кулленхи хисеплӗ задачи пулса тӑрать.

Комсомол организацийӗсем Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫамрӑксене воспитани парас, вӗсене фронтпа ҫӗршыв ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессишӗн кӗрешме мобилизацилес тӗлӗшпе сахал мар пархатарлӑ ӗҫсем турӗҫ. Комсомол Хӗрлӗ Ҫар валли резервсем, промышленность валли квалификациллӗ кадрсем хатӗрлеме пулӑшрӗ. Комсомол, ҫутӗҫ организацийӗсемпе пӗрле, шкулсенче ҫамрӑк ӑрӑва воспитани парас ӗнӗпе тӑрӑшса ӗҫлет. Комсомол колхоз ҫамрӑкӗсене ялхуҫалӑх умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешме мобилизацилесе пырать. Ҫак ӗҫсенче комсомолӑн Чӑваш организацийӗ те хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартса пачӗ.

Анчах республикӑри комсомол организацийӗсенче большевикла йӗркелӗх, хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина, культурӑлӑх ытларах пулнӑ пулсан тата ВЛКСМ Обкомӗпе райкомӗсем пуҫламӗш организацисене лайӑхрах ертсе пынӑ пулсан, пирӗн республикӑри комсомол организацийӗн ӗҫӗсем тата лайӑхрах пулма пултарнӑ. ВЛКСМ Центральный Комитечӗ «ВЛКСМ Чӑваш организацийӗн ӗҫӗсем пирки» йышӑннӑ решенире комсомол ӗҫӗнчи нумай ҫитменлӗхсене уҫса палӑртнӑ. Комсомолӑн республикӑри активӗн пухӑвӗ, ҫав решени пӗтӗмлех тӗрӗс пулнине йышӑнса, комсомол Обкомӗпе райкомӗсен тата пуҫламӗш организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене питех те ҫивӗччӗн критиклерӗ.

Комсомол организацийӗсем ӳссе вӑйланса пырасси тата лайӑх ӗҫлесси, тӗпрен илсен, ҫамрӑксене воспитани парассине лайӑх йӗркеленинчен килет. Комсомолӑн республикӑри тата районсенчи работникӗсем хӑйсен кулленхи ӗҫӗнче ҫавна тивӗҫлипе шута илменни юлашки вӑхӑтра комсомол ӗҫне сӳрӗклетесси патне илсе пынӑ. Республикӑри хӑшпӗр районсенче комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗсем саланса кайнисем пулнӑ тата чылай организацисем хӑйсен ӗҫӗсене япӑхтарнӑ. Апла пулин те, ВЛКСМ Обкомӗпе райкомӗсен руководителӗсем пуҫламӗш организацисене тӗреклетес, вӗсен ӗҫне ҫӗклес тӗлӗшпе мӗн юлашки вӑхӑтченех ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ-ха. Республикӑри 117 организацинче секретарьсем тата комсомолӑн чылай райкомӗсенче инструкторсем ҫук. Ҫапах та ВЛКСМ Обкомӗ, уйрӑмӑн илсен, ВЛКСМ Обкомӗн кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Аверьянова юлташ комсомол работникӗсен кадрӗсене суйласа илес ӗҫе вӑраха хӑварса пынӑ.

Комсомол Обкомӗпе райкомӗсем ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе организацилесси ҫине ҫителӗксӗр ҫавӑрӑнса пӑхнине пула, нумай пуҫламӗш организацисем йыш тӗлӗшӗнчен хуллен ӳсеҫҫӗ. Комсомол ретне кӑҫалхи иккӗмӗш кварталта 2.111 ҫын илнӗ пулсан, виҫҫӗмӗш кварталта вара 1.668 ҫамрӑка ҫеҫ илнӗ. Ҫамрӑксене комсомола явӑҫтарасси уйрӑмӑнах Элӗк, Ҫӗрпӳ, Канаш районӗсенче начар пырать. Республикӑри чылай колхозсенче комсомол организацийӗсем ҫук. Ҫапла, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 19 колхозра, Улатӑр районӗнче 11 колхозра комсомол организацийӗсем туман. Апла пулин те, комсомол райкомӗсем пуҫламӗш организацисене ҫирӗплетес тӗлӗшпе таткӑлӑ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Комсомол работникӗсем хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне тата культурлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлени сисӗнет. Комсомол организацийӗсене лайӑх ертсе пырас, вӗсен ӗҫне тӗрӗс организацилес тесен, кадрсен пӗлӗвне куллен ӳстерсе пымалла. Анчах ВЛКСМ Обкомӗпе райкомӗсем ҫав ӗҫе тивӗҫлипе организацилемен. Шупашкарта тата ытти хӑшпӗр районсемпе хуласенче актив шкулӗсене организациленӗ. Вӑл шкулсем кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗха. Шупашкарти шкула 100 ҫын вырӑнне 50 ҫын ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ.

Комсомол организацийӗсем шкулсенче вӗренӳ пахалӑхне лайӑхлатас, ҫамрӑксене физкультурӑпа ҫар ӗҫне вӗрентес енӗпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Хӑшпӗр районсенче вӗренме тивӗҫлӗ ачасене пурне те шкула явӑҫтарман. Комсомол организацийӗсем ҫав ҫитменлӗхсем ҫине ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Комсомолӑн шкулсенчи организацийӗсен ӗҫне ҫӗклес енӗпе ҫывӑх вӑхӑтрах нумай ӗҫсене пурнӑҫа кӗртмелле.

ВЛКСМ Обкомӗпе райкомӗсен ӗҫӗнче пуҫламӗш организацисене канцеляринче ларса ертсе пырас йӑла нумай сарӑлнӑ. Критикӑпа самокритикӑна йӑвашлатнӑ тата йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе пырас ӗҫе организацилемен.

Комсомол ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсемшӗн парти организацийӗсем те ответлӑ. ВКП(б) райкомӗсемпе хула комитечӗсем ВКП(б) Обкомӗн XIV-мӗш пленумӗ комсомол организацийӗсене ертсе пырассине лайӑхлатма кӑтартса панине тивӗҫлипе пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. Вӗсем комсомол ӗҫӗ ҫинчен сайра хутра кӑна сӳтсе-яваҫҫӗ, ҫитменлӗхсене пӗтерме сахал пулӑшаҫҫӗ. Парти организацийӗсем активлӑн пулӑшмасӑр, комсомол ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме май ҫук. Ҫакӑн ҫинчен пӗр минутлӑха та манма юрамасть.

Комсомол активӗн ВЛКСМ Центральный Комитечӗ йышӑннӑ решение сӳтсе явас ыйтупа пулса иртнӗ районсенчи тата республикӑри пухӑвӗсем, комсомол ӗҫне тӗплӗн тишкерсе тухса, унӑн ӗҫне ҫӗклеме таткӑлӑ мероприятисем палӑртса хӑварчӗҫ. Вӑл мероприятисене пурнӑҫа кӗртесси, чи малтан, ҫамрӑксене воспитани парас ӗҫе лайӑхлатмаллине пӗлтерет. Комсомол Обкомӗпе райкомӗсен ҫывӑх вӑхӑтрах ҫамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатмалла. Комсомол организацийӗсен ҫамрӑксемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме, вӗсене воспитани пама нумай майсем пур. Комсомолӑн уҫӑ пухӑвӗсене иртерни, докладсемпе калаҫусем, лекцисем иртерни, художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсене организацилени, комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисене организацилени тата ытти нумай тӗрлӗ мероприятисем,—ҫаксем пурте комсомола ҫамрӑксемпе таччӑнрах ҫыхӑнса тӑма пулӑшаҫҫӗ.

Комсомол — большевиксен партийӗн ҫывӑх помощникӗ. Парти организацийӗсем куллен пулӑшса пырсан, республикӑри комсомол организацийӗ ҫамрӑксене воспитани парас ӗҫе кӑтартуллӑн организацилеме пултарать, организацилемелле те.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 23-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Карели фронтӗн ҫарӗсем, Заполярьери ҫывӑр условисенче, ПЕТСАМО хулинчен хӗвеланӑҫнелле тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле наступлени туса пырса, никель кӑларакан пӗтӗм района нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, САЛЬМИЯРВИ ялне йышӑннӑ. Пирӗн ҫарсем РОВАНИЕМИ пункчӗпе КИРКЕНЕС хушшинчи шоссе ҫулне татнӑ.

БАЛТИКА ТАРАХӖНЧИ 1-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пырса, Клайпеда облаҫӗн территорийӗнче халӑх пурӑнакан 500 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — ШИББЭН хулипе пысӑк чугун ҫул станцийӗ, ШАЙПЕН-ТОМС, ПАККАМОРЕН, ПЛИККЕН, ДИНВЕТЕН, ДАВИЛЛЕН, СТАРИШКЕН, ДИТТАУЭН, ПРЭКУЛЬС, ВИЛКИТЕН, КУКОРАЙТЕН, КИШКЕН, КИНТЕН, ВИНДЕНБУРГ, БИСМАРК, ЮГНАТЕН, ЗАУСГАЛЛЕН, ТАТТАМИШКЕН, ШАКУНЕЛЛЕН, АЛЬТКАРЦЕВИШКЕН, ШТОНИШКЕН, РУКЕН, ПОГЕГЕН, ТРАКЕНИНГКЕН, УЖБИТШЕН, ВИЛЛКИШКЕН, ВЕЖЕНИНГКЕН, БАЛТУПЕНЕН, ВИШВИЛЛ, АУГСТОГАЛЛЕН ятлӑ пысӑк ялсем тата ДОЙТШ-ГРОТТИНГЕН, МИТЦКЕН, ПРЭКУЛЬС, КУКОРАЙТЕН, ЮГНАТЕН, МЭДЕВАЛД, ШТОНИШКЕН, ПОВИЛКЕН, ГУДДЕН, ГРЕЖПЕЛКЕН, ЛАУГЖАРГЕН ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем НЕМАН шывӗн сылтӑм хӗррине шыв вӑрринчен пуҫласа ЮРБАРКАС (ЮРБУРГ) хули патне ҫитиччен пӗтӗмӗшпех тӑшмантан тасатнӑ. Ҫапла вара пӗтӗм Клайпеда облаҫӗн территорийӗнче тӑшман аллинче мӗн пурӗ те КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) хули те хула ҫывӑхӗнчи темиҫе ял кӑна тӑрса юлнӑ.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени пуҫласа ярса, артиллерипе авиаци йышлӑн пыра-пыра ҫапса пулӑшнипе, нимӗҫсен нумай вӑхӑтлӑха тунӑ тата нумай линирен тӑракан оборонине, Хӗвелтухӑҫ Пруссин чиккисене хӳтӗлесе тӑракан-скерне, татнӑ та Хӗвелтухӑҫ Прусси ҫӗрӗ ҫине 140 километр сарлакӗш фронтпа 30 километр шалалла кӗрсе кайнӑ. Фронт ҫарӗсем тӑшман оборонин тӗреклетнӗ хӑватлӑ пункчӗсене — ШИРВИНДТ, НАУМИЕСТИС (ВЛАДИСЛАВОВ), ВИЛЛЮНЕН, ВИРБАЛИС (ВЕРЖБОЛОВО), КИБАРТАЙ (КИБАРТЫ), ЭЙДТКУНЕН, ШТАЛЛУПЕНЕН, МИЛЛЮНЕН, ВАЛЬТЕРКЕМЕН, ПИЛЛЮПЕНЕН, ВИШТЫНЕЦ, МЕЛЬКЕМЕН, РОМИНТЕН, ГРОСС РОМИНТЕН, ВИЖАЙНИ, ШИТТКЕМЕН, ИШЕРОСЬЛЬ, ГОЛЬДАП, ФИЛИТУВ, СУВАЛКИ пункчӗсене туртса илнӗ тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 900 пункта яхӑн йышӑннӑ, вӗсенчен 400 пункта ытла—Хӗвелтухӑҫ Прусси территорийӗнче.

Чехословаки ҫӗрӗнче МУКАЧЕВО хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, ДУБОВЕ, КАЛИНИ, ГАНИЧИ, ТЕРНОВО, ВУЛИХОВЕЦ, УГЛЯ, КОЛОДНЕ, ТЕРЕБЛЯ, КРИЧОВО, ШАНДОРОВА, СОЛДОБОШ, БУШТИНА ялӗсене тата НИЖНЯЯ НОВОСЕЛИЦА, ТЯЧЕВО, БУШТИНА чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ.

Ҫурҫӗр Трансильванире пирӗн ҫарсем, Румыни ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, ВИЙЛЕ-СЕТМАРОЛУЙ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — БИКСАД, БОЙНЕШТИ, ОРАШУЛ-НОУ, ИОЖИБ, БАБАШЕШТИ, МАРТИНЕШТИ, ОДОРЕУ, АМАЦ, АРДЕД, АКЫШ, КЭУАШ, САНТЭУ, ПОРТИЦА, ПИШКОЛЬЦ ятлӑ пысӑк ялсем тата БИКСАД, ЛОАШУЛ-НОУ, СЭКЭШИАНЫ, ТАШНАД ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Венгри ҫӗрӗнче НЬИРЕДЬХАЗА хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ТИССА шывӗн кӑнтӑр хӗррине тухнӑ, ДОМБРАД, ИБРАНЬ, БЕРЦЕЛ, ВЕНЧЕЛЛЕ, РАКАМАЗ, ТИССА, ЛЬОК ялӗсене туртса илнӗ.

БЕЛГРАД хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, Югослави халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсемпе пӗрле кӗрешсе, САВА шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ. БЕЖАНЬЯ ятлӑ пысӑк яла тата ЗЕМУНСКО-ПОЛЕ ятлӑ чугун ҫул станцине йышӑннӑ.

Нимӗҫсене хирӗҫ кӗрешекен Болгари ҫарӗсем, Югослави халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсемпе тата пирӗн ҫарсемпе пӗрле ҫапӑҫса, Югославин КОЧАНА хулине тата ДРЕНАК, СТРАЦИН, ВЕТУНИЦА, БЕЛИ ятлӑ пысӑк ялсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 187 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 31 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАНӐН ВИНДАВА ПОРЧӖПЕ ЛИБАВА ПОРТӖНЧИ ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ТАПАННИ

Октябрӗн 23-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци нимӗҫсен Виндава порчӗпе Либава портӗнчи транспорчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Виндавӑна тапӑннӑ вӑхӑтра портри причалсем патӗнче тӑшманӑн 10 транспорчӗ пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, причалсем патӗнче тата порт территорийӗнче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Взрывсем таможня склачӗсен районӗнче уйрӑмах вӑйлӑ пулнӑ.

Либавӑна тапӑннӑ чухне Либава портӗнчи причалсем патӗнче тата рейдра тинӗс ҫинче ҫӳрекен 30 транспорчӗ ытла тӑнӑ. Нимӗҫсен Зимний, Новый тата Вольный портсенче тӑнӑ транспорчӗсем хушшинче, ҫавӑн пекех тата рейдра тӑнӑ суднисем хушшинче бомбӑсем ҫурӑла-ҫурӑла кайни паллӑ пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, нумай тӗлте пушарсем тухнӑ. Пушарсенче 7 тӗлте вӑйлӑ взрывсем пулнӑ. Горючи склачӗсен территорийӗнче те ҫавӑн пекех вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсем наступлени пуҫласа янӑ. Наступлени пуҫласа ярас умӗн пирӗн авиаци ҫӗрӗпех нимӗҫсен оборонин малти хӗрри ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Тул ҫутӑлса килнӗ чухне унта пирӗн темиҫе ҫӗр штурмовикпа бомбардировщик вӗҫсе пынӑ. Вӗсем тӑшман укрепленийӗсене тата унӑн фронт патӗнчи ҫулйӗрӗсене темиҫе сехет хушши пӗр чарӑнмасӑр пыра-пыра ҫапнӑ. Ун хыҫҫӑн артиллери пеме тытӑннӑ. Тӗрлӗ калибрлӑ йышлӑ тупӑсем нимӗҫсен позицийӗсене пенӗ, тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнӗсене пусара-пусара лартнӑ. Вут-хӗм хумӗ хыҫҫӑн атакӑна совет пехоти кӗрсе кайнӑ. Пирӗн боецсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса кӗрсе, тӑшманӑн питӗ йышлӑ чӑрмавӗсене тата дотсем, дзотсем, бронеколпаксем лартса тултарнӑ траншейисен тӑтӑш пыракан 3 линине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Тӑшман питӗ хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ, пӗр чарӑнмасӑр контратакӑсем тунӑ.

Нимӗҫсем, хӑйсен ҫарӗ ҫав тери нумай пӗтнине пӑхса тӑмасӑр, ҫапӑҫӑва ҫӗнӗ те ҫӗнӗ пехота чаҫӗсене тата темиҫе ҫӗр танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ кӗртекӗрте янӑ. Тӑшман хаяр хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн нумай вӑхӑтлӑха тунӑ укрепленийӗсене ҫӗмӗре-ҫӗмӗре, пирӗн ҫарсем Шешупа шывӗ урлӑ каҫнӑ та вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Наумиестис (Владиславов) ялне туртса илнӗ. Наступление вӑйлатса пырса, пирӗн пехотинецсем Совет Союзӗпе Германи чикки урлӑ каҫса кайнӑ, Хӗвелтухӑҫ Прусси ҫӗрне кӗрсе кайнӑ, нимӗҫсен ланса кайнӑ, ку ҫапӑҫусем пӗр талӑка яхӑн пынӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен икӗ дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, трофейсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра 70 тупӑ. Нимӗҫсен Ширвиндт хулине вӑркӑнса кӗнӗ. Хула урамӗсенче ҫав тери хаяр ҫапӑҫусем пуҫ-800 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Нимӗҫсен Хӗвелтухӑҫ Прусси чикки тӑрӑх пыракан оборонин питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗ тӑрӑхне татнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем тӑшман оборонин иккӗмӗш линийӗ патне пырса тухнӑ. Кунти позицисем темиҫе лини траншейӑсенчен, тимӗрпе бетонран тунӑ йышлӑ дотсенчен тӑраҫҫӗ. Ҫав дотсем хушшинче нумайӗшӗнче икшер-виҫшер, час-часах тата ултшар амбразурлисем те пур, минӑсем лартса тултарнӑ вырӑнсем тата пралук картисем питӗ йышлӑ, пралуксем тӑрӑх электричество токӗ янӑ. Совет ҫарӗсем нимӗҫсен ҫак оборона тӑрӑхне те татнӑ. Тӑшман контратакисене сире-сире ярса, пирӗн танкистсемпе пехотинецсем ҫине тӑрсах малалла куҫса пынӑ, нимӗҫсен Шталлупенен хулине туртса илнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем Роминте шывӗ урлӑ каҫнӑ та гитлеровецсенчен пысӑк вӑрманлӑ вырӑна тасатнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсен Гольдап хулине тытса илнӗ. Тепӗр районра пирӗн ҫарсем нимӗҫсене Филипув ятлӑ тӗреклетнӗ пунктӗнчен хӗссе кӑларнӑ, Сувалки патӗнчи ҫирӗплетнӗ района ҫурҫӗр енчен кайса ҫавӑрса илнӗ те хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Сувалки хулине тытса илнӗ.

Хӗвелтухӑҫ Прусси ҫӗрӗнче пулса пыракан ҫапӑҫусенче тӑшман ҫав тери пысӑк сухатусем тӳсет. Гитлеровецсем хӑйсен шӑтӑкне пур майсемпе те хӳтӗлеҫҫӗ. Тулли мар даннӑйсем тӑрӑх, ӗнер кӑна 4.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 111 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, пирӗн ҫарсем темиҫе ҫӗр тупӑ, минометсем, пулеметсем нумай тата пысӑк боеприпас склачӗсем тытса илнӗ.

* * *

Венгри ҫӗрӗнче Ньиредьхаза хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Нимӗҫсемпе венгерсем хушӑри позицисенче ҫирӗпленсе ларма шутланӑ, анчах та вӗсем нимӗнле ҫитӗнӳ те тӑвайман. Пирӗн кавалеристсемпе танкистсем Тисса шывӗ хӗррине пырса тухнӑ. Чылай участоксенче гитлеровецсене шыв хӗррине хӗстерсе лартнӑ та аркатса тӑкнӑ. Тӗрӗсленӗ даннӑйсем тӑрӑх, Ньиредьхаза хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн 3.000 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 49 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине пӗтерсе тӑкнӑ. 20 тупӑ, 10 паровоз, 1.400 чугун ҫул вагонӗ, 900 пичке горючи тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. Нимӗҫсемпе венгерсен 1.780 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене туянмасӑр пӗр ӗҫҫынни те ан юлтӑр

Паян предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе МТС-сенче укҫапа япаласен тӑваттӑмӗш лотерейин билечӗсене сарас ӗҫ пуҫланать. Тӑваттӑмӗш лотерея билечӗсене пӗтӗмпе 5 миллиард тенкӗлӗх сарма палӑртнӑ. Ҫак лотерейӑра 5 миллион выляв 1 миллиард тенкӗлӗх пулать.

Укҫапа япаласен билечӗсене сарнипе пухӑнакан укҫа-тенкӗ Тӑван ҫӗршывӑн оборонине тӗреклетнӗ ҫӗре каять. Совет ӗҫҫыннисем, 1941 ҫулта укҫапа япаласен 1-мӗш лотерейин билечӗсене туянса, государство бюджетне 1 миллиард та 400 миллион тенкӗ, 1942 ҫулта 2-мӗш лотерея билечӗсене туянса, 2 миллиард та 100 миллион тенкӗ, 1943 ҫулта 3-мӗш лотерея билечӗсене туянса 3 миллиард та 700 миллион тенкӗ панӑ. Ҫак укҫа-тенкӗ Хӗрлӗ Ҫар валли вӑрҫӑ техники, боеприпассем, апат-ҫимӗҫ ытларах парса тӑма пулӑшнӑ. Укҫапа япаласен лотерейи ӗҫҫыннисемшӗн те усӑллӑ. Лотерея билечӗсем тӑрӑх вылявсем нумай тухаҫҫӗ. Ҫапла, 3-мӗш лотерея тӑрӑх кӑна вылявсем 8 миллион тенкӗлӗх тухнӑ.

Ҫавӑнпа ӗнтӗ совет ӗҫҫыннисем, укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарас ӗҫе активлӑн хутшӑнса, фронтпа ҫӗршыва хӑйсем перекетленӗ укҫа-тенке парса пулӑшаҫҫӗ.

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем те хӑйсен тӑван ҫӗршыв умӗнчи патриотла тивӗҫне яланах чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Вӗсем, предприятисемпе колхозсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлесе, ҫӗршывпа фронт валли промышленность продукцийӗ, ялхуҫалӑх продукчӗсем ытларах та ытларах парса пынӑ вӑхӑтрах фронтпа ҫӗршыва укҫа-тенкӗпе те пулӑшаҫҫӗ. Предприятисемпе колхозсенчи ӗҫҫыннисем государство заемӗсене илме пысӑк ҫӗкленӳпе ҫырӑнаҫҫӗ. хӑйсем перекетленӗ укҫа-тенке Хӗрлӗ Ҫар валли вӑрҫӑ техники туяннӑ ҫӗре параҫҫӗ. Укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарасси те ҫулран ҫулах ӳссе пырать. Ҫапла, республикӑри ӗҫҫыннисем укҫапа япаласен 1-мӗш лотерейин билечӗсене 5 миллион та 900 пин тенкӗлӗх, 2-мӗш лотерея билечӗсене 16 миллион тенкӗлӗх, 3-мӗш лотерея билечӗсене 33 миллион тенкӗлӗх ытла туяннӑ.

Иккӗленмелли ҫук, Чӑваш республикинчи рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем тата служащисем укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсене сарас ӗҫре те хӑйсен патриотизмне уҫҫӑн кӑтартса парӗҫ.

Укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарасси — кӗске вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртмелли ответлӑ ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ, тӗпрен илсен, предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсемпе МТС-сенче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленинчен килет. Перекет кассисене пулӑшакан комиссисен лотерея билечӗсене сарма пуҫланӑ кунах ӗҫҫыннисене лотерея условисем ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса памалла. Ҫакна актив ҫине таянса ӗҫлемесӗр пурнӑҫа кӗртме йывӑр пулать. Ҫавӑнпа та партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен лотерея билечӗсене сарас ӗҫе актива ытларах явӑҫтармалла тӑвас пулать.

Укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарнипе пӗрлех, билетсемшӗн укҫа пухас ӗҫ ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Билет укҫине рабочисемпе служащисем хушшинче те, колхозниксем хушшинче те ҫийӗнчех пухассишӗн тӑрӑшмалла. Билет укҫине пухассине тата билетсене салатса парас ӗҫе 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех вӗҫлемелле.

Рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем тата служащисем, укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсене сарас ӗҫе пурте активлӑн хутшӑнар, лотерея билечӗсене туянса, фронтпа ҫӗршыва укҫа-тенкӗ парса пулӑшар!

Совет Правительстви Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствине йышӑнни

Октябрӗн 23-мӗшӗнче Совет Союзӗн Францири представителӗ А. Е. Богомолов Францин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрне ҫапла каланӑ:

«Совет Правительстви аяларахра кӑтартса пани ҫинчен пӗлтерме кирлӗ тесе шутлать:

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Великобритани Правительствисем Францире французсен Администрацийӗ тытса тӑракан шалти зонӑна (ҫав зонӑна Париж хули те кӗрет) туса хурасси пирки ҫӳлерехре кӑтартнӑ Правительствӑсем французсен влаҫӗсемпе килӗшӳ туни ҫинчен Совет Правительствине пӗлтерчӗҫ. Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Великобритани Правительствисем ҫавӑн пекех тата ҫак икӗ Правительство та Францин Вӑхӑтлӑх Правительствине йышӑнасси ҫинчен заявлени тӑватпӑр тесе Совет Правительствине пӗлтернӗ.

Совет Союзӗ, демократиллӗ Франци ҫине пӗр улшӑнмасӑр туслӑн пӑхса, Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Великобритани Правительствисен ҫӳлерехре кӑтартнӑ решенийӗсене ырласа саламлать. Ҫакӑнпа пӗрлех Совет Правительстви Францин Вӑхӑтлӑх Правительствин демократиллӗ никӗсӗсем ҫирӗпленнине, ҫавӑн пекех тата Союзлӑ Виҫӗ Держава Вӑхӑтлӑх Правительствӑна йышӑнни — пуриншӗн те пӗр тӑшман пулса тӑракан гитлерла Германие хирӗҫ малалла кӗрешме Француз халӑхне татах та таччӑнрах пӗтӗҫтермешкӗн, унӑн вӑйӗсене мобилизацилемешкӗн пулӑшассине те шута илет.

Совет Правительстви ҫакӑнпа ӗнтӗ Франци Республикин Вӑхӑтлӑх Правительствине йышӑнмалла туни ҫинчен тата Совет Союзӗн Представительне А. Е. Богомолова Францири Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посол пулмашкӑн уйӑрса лартма кӑмӑл туни ҫинчен пӗлтерет».

Ҫакӑнпа пӗрлех, Великобританипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем те Францин Вӑхӑтлӑх Правительствине йышӑнасси ҫинчен пӗлтернӗ.

СССР НАРКОМИНДЕЛӖН ИНФОРМАЦИ БЮРОВӖ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнче

Совет гражданӗсене Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлеме СССР Совнаркомӗн Уполномоченнӑйне уйӑрса лартни

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн кӑҫалхи октябрӗн 4-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленийӗ тӑрӑх, Ф. И. Голиков генерал-полковника ССР Союзӗн гражданӗсене, тыткӑна лекнӗскерсене, Германие тата вӑл оккупациленӗ ҫӗршывсене ирӗксӗрлесе илсе кайнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлеме СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Уполномоченнӑйӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

Унӑн заместителӗсем пулма—И. В. Смородинов генерал-полковникпа К. Д. Голубев генерал-лейтенанта, совет гражданӗсене тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлекен Уполномоченнӑйӑн помощникӗсем пулма В. М. Драгун генерал-майорпа А. А. Смирнов юлташа уйӑрса лартнӑ.

Совет гражданӗсене тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлекен Уполномоченнӑй ҫине ССР Союзӗн гражданӗсене Германирен тата вӑл оккупациленӗ ҫӗршывсенчен, вӗсене Хӗрлӗ Ҫарпа союзниксен ҫарӗсем ирӗке кӑларса пынӑ май, Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тата ССР Союзӗн ирӗке тухнӑ гражданӗсене тӑван ҫӗршыва куҫса килме пулӑшас ӗҫсене ертсе пырассине хунӑ.

ФАШИСТЛА ТИСКЕР КАЙӐКӐН ЙӐВИНЕ ҪӖМӖРСЕ КӖНӖ!

Кӗтни тинех ҫитрӗ! Вырӑс ҫӗрне сӗмсӗррӗн ҫаратса пӗтерме килнӗ ирсӗрсене историн тӗрӗслӗх сучӗ карланкӑран ҫирӗппӗн ярса тытрӗ. «Пирӗн чикӗ Неман шывӗ ҫинче мар, Амур шывӗ ҫинче пулать»,— тесе, кӑҫӑхса кайсах ҫырнӑ Кенигсбергри тата Берлинри хаҫатсем 1941 ҫулхи кӗркунне.

Халӗ ӗнтӗ вӗсем хӑйсен ҫав ухмахла сӳпӗлтетӗвне манма тӑрӑшӗҫ. Анчах эпир манмастпӑр. Хӗвелтухӑҫ Пруссийӗ Германи империализмӗн чи чарусӑр та хӗрхенӳсӗр, чи усал та агрессиллӗ тискер-кайӑкӗсен тӗп йӑви пулса тӑнине эпир манмастпӑр.

«Колонизацилемелле мар, вӗлерсе пӗтермелле» текен хатӗр лозунга ҫурма ӑслӑ ефрейтор Гитлер Кенигсбергпа Тильзит хаҫачӗсенчен илнӗ. Ҫав хаҫатсем мӗн ӗлӗкренпех поляксемпе литовецсене ҫавнашкал сынҫиенле «рецептпа» пӗтерсе пыма сӗннӗ. Эпир, нимӗҫсен тискерлӗхӗсем ҫинчен калакан документсене ятарласа тӗпчесе тухнӑскерсем, тахҫантанпах ҫакӑн ҫинчен пӗлетпӗр ӗнтӗ: никам та мар, чи малтан пруссаксем мӗнпур нимӗҫсенчен чи тискеррисем, юншӑн хыпӑнса тӑраканскерсем пулнӑ.

Сталинла Хӗрлӗ Ҫарӑн воинӗсене—мухтав! Вӗсем фашистла тискер кайӑка тивӗҫлипе тавӑрӗҫ, вӗсем ҫав тискер кайӑкӑн шӑтӑкне ҫӗмӗрсе кӗчӗҫ, вӗсем ӑна ҫавӑнта ҫапса вӗлереҫҫӗ!

Пирӗн Сталина — мухтав!

Академик Е. ТАРЛЕ.

Валентин Черепанов хӑйӗн тӑван хулинче

Горький облаҫӗнчи Дзержинск хулине пӗр гвардейски стрелковӑй полкри красноармеец Валентин Дмитриевич Черепанов канма таврӑннӑ. Ҫав Черепанов ҫинчен «Правда» хаҫат сентябрӗн 11-мӗшӗнче «Организмӑн пурнӑҫ функцийӗсене ҫӗнӗрен хута яни» ятлӑ статьяра ҫырса пӗлтернӗччӗ. Шок пирки тата юн ытла нумай кайнӑ пирки 1944 ҫулхи мартӑн 3-мӗшӗнче 19 сехет те 41 минутра вӑл вилнӗ пулнӑ, анчах та 3 минут та 35 секунт иртсен, В. А. Неговский бригади тӑрӑшнипе, вӑл каллех пурӑнма пуҫланӑ.

Черепанов Экспериментлӑ медицина институчӗн Мускаври клиникинче сывалса выртнӑ хыҫҫӑн халь киле таврӑннӑ. Вӑл ҫирӗп, хавас. Совет медицинине пула тепӗр хут пурӑнма пуҫланӑ ҫак воин халӗ сывалса пырать, вӑй пухать.

Хулари обществӑллӑ организацисем Черепановпа унӑн ҫемьине лайӑх пӑхаҫҫӗ, вӗсемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Черепановӑн аслӑ пиччӗшӗ Виктор тата аппӑшӗ Тамара халь фронтра, ашшӗ 1941 ҫулта Харьков хулине хӳтӗленӗ чухне паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Хула совечӗ фронтовиксен Черепановсен ҫемьине ҫӗнӗ хваттер парать. Валентин Черепанов ҫитес вӑхӑтра каллех шофер-механиксен курсне вӗренме каясшӑн (вӑрҫӑччен вӑл ҫав курсра вӗреннӗ). (ТАСС).

Я. Ю. Алиев—Узбек ССР-ӗн Ют Ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ

ТАШКЕНТ, октябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Узбек ССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх Якуб Юсупович Алиев юлташа Узбек ССР-ӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

И. И. Сюкийянен—Карел-Финн ССР-ӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ

ПЕТРОЗАВОДСК, октябрӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Карел-Финн ССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, Иосиф Иванович Сюкийянена Карел-Финн Республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

ХАКЛĂ ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ!

Патриотла туйăмпа хавхаланса, вилнĕ Патриарх Сергий чĕнсе пуçарнипе, Вырăссен Православи Чиркĕвĕн ĕненекенĕсемпе клирĕ вăрçă пынă мĕнпур тапхăрта укçа-тенкĕсем пухса, вĕсене вăрçă нушине тивĕçтернĕ çĕре, уйрăмăн илсен Дмитрий Донской ячĕпе тăракан танксен колоннине тунă çĕре хывнă, çапла вара Эсир Верховнăй Çулпуç пулса ертсе пынипе пĕтĕм вырăс халăхĕ туса пыракан кĕрешӳре вĕсен аслă ĕçне хăйсен вăйне панă. Çав патриотла ĕçсем çинчен эпир пĕлтерни çине Эсир чĕререн ырă сунса панă ответсем укçа-тенкĕ паракансене хавхалантарса панă, вĕсен йышĕ вара татах та нумайрах ӳсрĕ. Халăхи вăхăта çавăн пек хывнă укçа-тенкĕн хисепĕ 150 миллион тенке çитет, ку шута нумай тĕрлĕ паха та хаклă япаласем пани кĕмест.

Вăрçă часах пĕтесси курăнсах тăрать ĕнтĕ: пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем туни тата вăл хăвăрттăн малалла куçса пыни Германи фашизмне часах çапса аркатассине кăтартса парать. Вăрçăн çак юлашки тапхăрĕнче пирĕн умма çĕнĕ задачăсем тухса тăраççĕ.

Вăрçă çĕнтерӳпе пĕтес кун çывхарса килнине паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсен ачисемпе çемьисем валли мĕнпур чиркӳсенче пуян парнесем пухса палăртма пирĕн Православи Чиркĕвĕн духовенствипе ĕненекенĕсене чĕнсе каламашкăн ырă вăхăт çитрĕ тесе шутларăм эпĕ.

Пирĕн Союзри мĕнпур ĕненекенсем пирĕн тăван воинсен, пире хӳтĕлекенсен ачисемшĕн тата вĕсен çемьисемшĕн çакăн пек тăрăшни вĕсен аслă паттăрлăхне татах та ытларах ӳстертĕр, пире вара хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ырă кунçулĕшĕн хăйсен юнĕсене те хĕрхенмесĕр кĕрешекенсемпе пĕтĕм чунчĕререн татах та таччăнрах пĕтĕçтертĕр!

Еçе пуçласа ярас шутпа, Патриархи малтанлăха пĕр миллион тенкĕ хывать.

Хаклă Иосиф Виссарионович, Сире, пĕтĕм вырăс халăх пурнăçĕшĕн куллен тăрăшакан çынна, çавăн пек патриотла çĕнĕ ĕç пуçланни çинчен пĕлтерсе, Эсир ăна ырласа кĕтсе илесси пирки эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп. Çакă вара вăл Эсир, пирĕн юратнă, Турă панă Верховнăй Çулпуç ертсе пыракан пĕтĕм халăхăн вăрçăри паттăр ĕçне хутшăнакансен аслă чыслăхне илес тесе, пире татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхалантарĕ.

Чĕрери хисепре тăракан Хаклă Иосиф Виссарионович, эпĕ, Сире пĕтĕм чунтан хисеплени çинчен шантарса каланине йышăнсамăрччĕ.

АЛЕКСИЙ, Ленинградпа Новгород Митрополичĕ, Патриарх вырăнне упраса усраканĕ.

1944 çул, октябрĕн 10-мĕшĕ, Мускав, Патриархи.

МУСКАВ

АЛЕКСИЕ, Ленинградпа Новгород Митрополитне, Патриарх вырăнне упраса усраканне

Хĕрлĕ Çар боецĕсен ачисемпе çемьисемшĕн тăрăшнишĕн Сире тав тăватăп.

Манăн салама тата Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр.

И. СТАЛИН.

С. ПРОКОФЬЕВĂН «ВОЙНА И МИР» ЯТЛА ОПЕРИНЕ ПĔРРЕМĔШ ХУТ ЮРЛАСА КĂТАРТНĂ

Сергей Прокофьев Л. Н. Толстойăн «Война и мир» ятлă романĕ тăрăх çĕнĕ опера çырнă. Октябрĕн 16-мĕшĕнче актерсен Мускаври çуртĕнче пĕтĕм Российăри театр обществин опера ансамблĕ композиторăн çĕнĕ произведенине пĕрремĕш хут юрласа кăтартнă.

Вырăссен аслă писателĕн патриотла произведенийĕ совет çыннисене халь, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă кунĕсенче, уйрăмах çывăх та хаклă произведени пулса тăрать. С. Прокофьев хăйĕн произведенине патриотла пысăк туйăмпа çырнă, çав ыйту вăл хальхи паттăр ĕçсемпе килĕшсе тăрать.

С. Прокофьевăн çĕнĕ оперине концертра юрласа кăтартни питĕ ăнăçлăн иртнĕ. (ТАСС).

Колхозсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина колхозникĕсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама чĕнсе каланине ĕçпе ответлес тесе, районри колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Колхозниксем йышăннă тăрăх, районĕпе Хĕрлĕ Çар фондне 16.000 пăт памаллаччĕ. Çак тырра районри колхозсем пĕтĕмпех парса татнă. Районра пĕр «Комбинат» колхоз кăна парса татман. Çак колхозăн председателĕ Волков юлташ Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе кирлĕ пек организацилемен.

* * *

ВАРМАР, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырсарникун пулнă массăллă воскресникре районри колхозсем хатĕрлев пунктне 1600 пăта яхăн тырă, 4200 пăт çĕрулми тата пахча-çимĕçсем леçнĕ. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне памалли тырра пур колхозсем те парса татнă. «Свобода» тата «Большевик» колхозсем кашниех 1080-шар пăт, «Красные Шептахи» колхоз — 840 пăт панă.

Государствăна обязательствăсем тăрăх памалли тырра районри пур колхозсем те парса татнă.

* * *

КУСЛАВККА, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар фондне районĕпе 16.000 пăт пама йышăннă. Паянхи кун тĕлне 14.000 пăт леçсе панă. Районри 57 колхозран 55-шĕ хăйсен илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçланă. «Победа» колхоз 200 пăт, «Путь Ленина» тата «16-ый Партсъезд» колхозсем 120-шер пăт Хĕрлĕ Çар фондне тырă панă. Калинин ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă парса татнă хыççăн 47 центнер купăста, кишĕр, кăшман панă. Эльменкассинчи «Кзыл Куч» колхоз та пахча-çимĕç парса татнă.

* * *

Шăхасан районĕнчи колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 26.000 пăт тырă пама йышăннă. Паянхи кун тĕлне хатĕрлев пунктне 26.150 пăт леçсе панă.

* * *

Чурачăк районĕнчи колхозсем те Хĕрлĕ Çар фондне 26.000 пăт тырă пама йышăннă. Паянхи кун тĕлне çак районри колхозсем хатĕрлев пунктне 26.490 пăт леçсе панă. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси малалла пырать.

* * *

Республикăри колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 500.000 пăт пама йышăннăччĕ. Октябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйсем тăрăх, Хĕрлĕ Çар фондне 431.422 пăт тырă леçнĕ. Республикăри 898 колхоз Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçланă.

Ялхуçалăх çулĕн малтанхи итогĕсем

ÇĔРПӲ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Чиричкассинчи «Малалла» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлакансен ретĕнче пулнă. Кăçал колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Отечественнăй вăрçă инвалидне Федоров юлташа суйланă хыççăн колхоз хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Колхозра виçĕ бригада. Çав бригадăсем тырпула август уйăхĕнчех вырса пĕтерне, кĕлтесене те пĕтĕмпех капана хывнă.

Тырпулсене тăкаксăр пуçтарса кĕртессишĕн колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр, вăя шеллемесĕр ĕçлерĕç. Нумай колхозниксем ĕç тухăçлăхне кунсеренех ӳстерсе пычĕç. Çапла, М. Васильева, Григорьева, А. Федорова колхозницăсем куллен 0,20 гектар тырă вырса, икшер норма тултарса пычĕç.

Колхоз тырă вырма тухнă хыççăн виçĕ тăватă кунтанах икĕ молотилкăпа авăн çапма тытăнчĕ. Авăн çапнă çĕрте барабанщица Григорьева юлташ уйрăмăнах лайăх ĕçлерĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене те чыслăн пурнăçа кĕртнĕ. Сентябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче государствăна тырă памалли плана тултарнă. Плана тултарнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 1.080 пăт тырă панă.

Халĕ колхозăн нимĕнле парăм та çук. Колхоз çитес çулшăн 15 центнер аш-какай, 10 центнер утă панă.

Колхоз кăçал гектартан ыраш 80 пăт, сĕлĕ 66 пăт, вика 90 пăт туса илчĕ. Государствăна 60 центнер вика панă, вăл 120 центнер тырăшăн шутланать. Тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе виççĕмĕш бригада (бригадирĕ Григорьев юлташ) мала тухнă.

Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне килограмм та 200-шер грамм тĕштырă, 3 килограмм çĕрулми авансла валессе панă.

Т. ИВАНОВ.

Авăн çапнă çĕрте тырра нумай тăккалаççĕ

Красноармейски районри Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красный боец» колхозра авăн çапнă çĕрте тырра нумай тăккалаççĕ. Çапла улăма тепĕр хут çапса тĕрĕслесен, çакă палăрнă: «Красный боец» колхозăн авăн çапнă чухне кашни тĕмре 400 грамм тырă улăм çине юлать, пĕр гектар çинчи тырра çапсан улăм çине 128 килограмм тырă юлать. Çапла вара кунта 65 гектар çинчи тырра çапса, 83 центнер тырă улăм çине хăварнă. Çак 65 гектар çинчи улăма тепĕр хут çапма тивнĕ.

Кунсăр пуçне, тĕрĕслесе пăхсан, тырă пучах çине те нумай юлни палăрнă. Пĕр кăрман пучахран 15 килограмм тырă тухнă. Çавăн пек пучаха вĕсем килĕрен пĕрер кăрман салатса панă. Çапла вара колхоз тыррине килĕрен пĕрер пăт пучахпа пĕрле салатнă.

Колхоз кая юлса пырать. Паянхи куна уйран икĕ гектар çинчи ясмăка, 3,5 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера пухса илмен.

Тырпулшăн кĕрешни — çĕнтерӳшĕн кĕрешни пулать. Анчах çакна «Красный боец» колхозра ăнланса илмен. Вĕсем, тырпула тăкса хăварса, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тивекен тырра сухатаççĕ.

Писательсен пухăвĕ

Октябрĕн 23-мĕшĕнче чăваш писателĕсемпе поэчĕсем, журналистсем тата наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕсем «Тăван Атăл» альманахăн ĕçне сӳтсе-явма пуçтарăнчĕç. Альманахăн виçĕ çулхи ĕçĕсем çинчен унăн ответлă редакторĕ А. Эсхель доклад туса пачĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа альманах пурĕ 12 кĕнеке тухнă. Малтанхи кĕнекесенче ытларах кĕске формăллă произведенисем (калавсем, сăвăсем, фронтран килнĕ корреспонденцисем) тухнă пулсан, каярахпа альманахра паянхи кун ыйтăвĕсемпе çырнă пысăк произведенисем те пичетлеме тытăннă. Ку енĕпе уйрăмăнах фронтри писательсемпе поэтсем П. Хузангай, Л. Агаков, М. Данилов-Чалдун таат ытти те ăнăçуллăн ĕçленĕ. Уйăп Мишши, А. Алга, К. Пайраш, Ф. Ситта, И. Тукташ, В. Ахтубай, В. Долгов-Хударсем аван произведенисем çырса тăнă.

Докладчик çавăн пекех тылри писательсен С. Эльгерĕн, Н. Шелебин. Иван Мучин, И. Ивникăн, Хв. Уярăн, Кăшкăр Микулин ĕçĕсене те лайăх енĕпе палăртса хăварчĕ.

Альманахра юлашки çулсенче чылай çĕнĕ ятсем (А. Анат, С. Аслан, И. Тенюшев, В. Туртуш, Т. Селезнев, Н. Евстафьев, З. Семенов тата ыттисем те) палăрчĕç. Вĕсенчен С. Асланпа Туртуш самай пысăк япаласемех пачĕç.

Альманахра пьесăсем сахал пичетленеççĕ, критикăпа библиографи пайне пачах та çителĕксĕр йĕркеленĕ, тыл çинчен çырнă произведенисем çукпа пĕрех.

Прение тухса калаçакансем (П. Григорьев, Иван Мучи, И. Тукташ. Н. Данилов, Н. Васянка, композитор Лебедев, Чăвашгиз директорĕ П. Золотов, К. Чулкаç тата ыттисем те), çитĕнӳсемпе пĕрлех, альманах ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртса хăварчĕç. «Тăван Атăл» искусство пурнăçĕпе сахал интересленет, литкружоксемпе таçчăн çыхăнса ĕçлемест, чĕлхе ыйтăвĕпе çырнă статьясем çук. Вырăсла куçарнă калавсенче тепĕр чух якатса çитермен вырăнсем те курăнкалаççĕ. Материалсене альманах страницисем çине вырнаçтарас ĕçре шăйрăксем нумай.

Фронтран аманса таврăннă В. Яковлев юлташ альманаха фронтри чăваш салтакĕсем çав тери юратса вулани çинчен каласа пачĕ.

Пуху малашне альманахра ытларах прозăпа çырнă произведенисем пичетлеме, публицистика тата критикăпа библиографи пайĕсене вăйлăлатма, çамрăк писательсемпе тачăраххăн çыхăнса ĕçлеме сĕнчĕ. Тылри колхозниксемпе колхозницăсем тата интеллигентсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлесе фронта пулăшни литературăра питĕ сахал курăнать. Ку енĕпе альманахра пурĕ те Иван Мучин кĕске калавĕсене тата К. Пайрашпа И. Трубина произведенийĕсене кăна асăнма пулать.

Пуху малашне альманахăн кашни номерне çакăн пек пуçтарăнса тĕплĕн сӳтсе-явма йышăнчĕ.

Фронтовиксен çемьисемшĕн куллен тăрăшмалла

Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшни — Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшни пулать. Пирĕн совет халăхĕ хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшассине яланах пысăк вырăна хурать. Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе пире Совет правительствипе большевиксен партийĕ чи лайăх тĕслĕх кăтартса пыраççĕ.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, партипе правительство кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пырса, вăрçă çулĕсенче çар çыннисен çемьисене пулăшас енĕпе сахал мар ĕç турĕç. Анчах та хальхи тапхăрта тăвакан ĕçсем çителĕклĕ теме çук-ха. Çавăнпа та ВКП(б) хула комитечĕпе хула совет исполкомĕ, çар çыннисен çемьисене пулăшассине вăйлатас тĕллевпе, октябрĕн 22-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче вунăкунлăх ирттерме йышăнчĕç.

Вунăкунлăх октябрĕн 22-мĕшĕнче çар çыннисем валли вутă турттарас тĕлĕшпе воскресник ирттернипе пуçланчĕ. Воскресник вăхăтĕнче 10 автомашина тата 69 лаша ĕçлерĕç. Вутă тиес тата пушатас ĕçе 420 çын ытла хутшăнчĕç. Воскресникe Досвет, ачасен 11-мĕшпе 13-мĕш сачĕсем, «Красный партизан» колхоз, Осоавиахимăн Центральный Совечĕ, «Спотара» тата ытти нумай организацисен коллективĕсем активлăн хутшăнчĕç.

Çав вăхăтрах Стройтрест, Военторг, механизациленĕ вăрман пункчĕн руководителĕсем çак ответлă ĕç çине тивĕçлипе пăхмарĕç, воскресникe хутшăнса ĕçлемерĕç. Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн заместителĕ Дашков юлташ воскресникe ĕçлеме тухнă çынсене Халăх Комиссариачĕ валли вутă тиесе турттарнă çĕрте ĕçлеттерме пикеннĕ.

Хĕл çывхарса килет. Халĕ фронтовиксен çемьисене пулăшасси çинчен калаçмалли, тĕрлĕ решенисем çырмалли вăхăт мар. Ĕççыннисем валли вутă тăратас тĕлĕшпе хула йывăрлăхсем тӳссе ирттерет. Апла пулсан, вăхăта вăраха ямасăр, хула валли, уйрăмăнах çар çыннисен çемьисем валли, вутă турттарас ĕçе пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитермелле. Пĕр автомашина та, хулари пĕр лаша та çав ĕçе хутшăнмасăр ан юлтăр. Хулари хуçалăх руководителĕсен, партипе комсомол организацийĕсен фронтовиксен çемьисем валли вутă çителĕклĕ турттарма татăклă мерăсем йышăнас пулать.

Çар çыннисен çемьисене хĕле хатĕрленме, уйрăмăн илсен, хваттерсем юсама, хĕллехи тумтирсем туянма пулăшмалла. Тумтирсем, атă-пушмаксем юсакан мастерскойсемпе вырăнти промышленность предприятийĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсене хăвăрт тивĕçтермелле туса организацилес пулать. Кашни предприяти коллективĕ çар çыннисен çемьисене пулăшма пĕр кун е ытларах ĕçлесе пама тата воскресниксем ирттерме пултарать.

Çар çыннисен çемьисене хĕлле валли апат-çимĕç продукчĕсем хатĕрлеме пулăшмалла. Çак ĕçе подсобнăй хуçалăхсен, партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен активлăн хутшăнмалла.

Хулари пĕтĕм общественноçăн хисеплĕ тивĕçĕ вăл — вунăкунлăха активлăн хутшăнасси. Вунăкунлăха лайăх ирттерни çĕнтерӳ туса пыракан мухтавлă Хĕрлĕ Çар воинĕсене паракан парнесенчен пĕри пулса тăрать.

С. ИСЛЮКОВ,
ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ.

Черчилльпе Иден Мускавра пулни çинчен Англипе Совет Союзĕ пĕрле пĕлтерни пирки Англипе Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: халĕ ĕнтĕ Польша пирки çеç калаçса татăлайман. Анчах та çакă вăл, тĕпрен илсен, поляксен тĕрлĕ ушкăнĕсем хушшинчи хирĕçӳ пулса тăрать. Пĕтĕмĕшле принципсем пирки Черчилльпе Сталин пĕр пек шухăшлаççĕ, тет сотрудник.

«Обсервер» хаçат çакна палăртать: Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрине килĕштерсе, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлессине сарас енчен пăхсан, Мускаври конференци, паллах ĕнтĕ, ăнăçлă иртнĕ. Анчах та çакă Польша ыйтăвне татса памасть. Миколайчик умĕнче йывăр ыйту тăрать. Миколайчикăн, чакма килĕшмен поляксем тата вырăссене хирĕç пыракан хăшпĕр çĕршывсенчи фанатиксем ялан хăйне хирĕç пынă пирки, асапланма тивет.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Мускавра И. Сталинпа У. Черчилль канашланине пула пĕрлешӳллĕ нацисем пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлесси ӳснине палăртаççĕ. Октябрĕн 22-мĕшĕнче «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ «Известипе» «Правда» хаçатсенчен тата Мускавра тухакан ытти хаçатсенчен те нумай вырăнсене илсе пичетлет. Корреспондент каланă тăрăх, çав хаçатсем «Мускаври калаçусем кăмăла кайни çинчен çыраççĕ, вăл калаçусем союзниксен пĕрлĕхне çирĕплетес ĕçе малалла янă, вĕсем ĕлĕкрех татса парайман йывăр ыйтусене сирсе янă тата ссюзниксем хальхинчен ытларах таччăн çыхăнса ĕçлессине хатĕрленĕ, çапла çыхăнса ĕçлени вăл Германие парăнтарассине хăвăртлатĕ».

Ассошиэйтед пресс тата Юнайтед пресс агентствисем те «Известипе» «Правда» хаçатсен умстатьисенчен уйрăм вырăнсене илсе пичетленĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Шельда шывĕ хĕрринчи «михĕ» районĕнче союзниксен çарĕсем Брескенс хулине тата Фредерик-Хендрик фортне тытса илнĕ. Союзниксем çавăн пекех тата Аарденбург хули патĕнчен Фрейбург хули патнелле малалла кайнă. Хĕвелтухăçнерехре кĕрешекен чаçсем Антверпен хулинчен çурçĕртерехре Скоондейк хулине тытса илнĕ. Тăшмана Эсшен хулинчен хĕссе кăларнă. Союзниксен çарĕсем кăнтăр-хĕвеланăçнелле каякан чугун çулăн икĕ айккипе те малалла кайнă, çавăн пекех тата Вествезельпе Ахтербукран каякан шоссе тăрăх малалла куçнă.

Аахен хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Вюрселен районне тăшмантан тасатаççĕ. Халĕ паллă пулнă тăрăх, Аахен хулинче 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Эпиналь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Брувельер хулине тытса илнĕ. Домфрен, Вервезель, тата Бельмон хулисене тăшмантан тасатаççĕ. Мезьер-ле-Мец хулинче халĕ те çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем Вогез секторĕнче тăшмана вăйлă хĕснĕ.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла 1.100 йывăр бомбардировщик ытла, 750 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Гамм, Мюнстер, Ганновер тата Брауншвейг районĕнчи промышленность объекчĕсемпе çулйĕрĕсене тапăннă. Йывăр бомбардировщиксен ытти эскадрильисем (вĕсене те истребительсем хӳтĕлесе пынă) Дюссельдорф çывăхĕнчи Нейсс порчĕпе паха чугун çул узелне хаяррăн тапăннă. Çав районра союзниксен авиацийĕн сухатусем пулман. Ытти соединенисем çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă.

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире 5-мĕш арми фронтĕнче нумаях пулмасть тунă çитĕнӳсене çирĕплетнĕ тата хăшпĕр позицисене лайăхлатнă. 8-мĕш арми фронтĕнче Червия ятлă пункта тытса илнĕ. Чезена хулинчен çурçĕртерехре Савно шывĕ хĕрринчи укрепление аслăлатнă.

Ĕнер çанталăк начар тăни сывлăшра çапăçма питĕ кансĕрленĕ.

ЧЕХОСЛОВАКСЕН БРИГАДИ ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧЕ ÇАПĂÇАТЬ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: Канадăн 1-мĕш армийĕнче нимĕçсене хирĕç чехословаксен бригади çапăçать. Çав бригадăна Англире хатĕрлесе çитернĕ, вăл фронта пĕрремĕш хут пынă.

Рейтер агентстви Рур облаçĕнчи лару-тăру çинчен

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, гестапо Рур облаçĕнчи промышленноçа тытса тăракан чи паллă 4 магната арестленĕ. Вĕсене пораженилле шухăш-кăмăла сарнишĕн тата Германин парăнмалла тесе каланишĕн айăпласçĕ.

Çав пĕлтерӳ тăрăх, Герман Рехлинга, Альберт Феглера, Фридрих Флика тата Клехнер доктора арестленĕ.

66 çулхи Рехлинг хăй вăхăтĕнче Гитлера пулăшса тăнă, ăна миллионшар марка укçа-тенкĕ панă. Вăл Германири «хурçă тресчĕн» пуçлăхĕ пулнă. Германин оккупациленĕ территорисем çинчи хурçă шăратакан предприятийĕсене ертсе пынă. Рехлинг Германин хĕçпăшалсем тĕлĕшпе ĕçлекен совечĕн членĕ пулса тăрать.

65 çулхи Феглер — паллă ученăй, иследователь, йывăр промышленноçпа çыхăнса тăракан чылай предприятисен руководителĕ.

60 çулхи Флик Рехлингăн чи çывăх сотрудникĕ пулнă, вăл техника консультанчĕ пулса, Шпеерăн «пуç мими тресчĕ» текен трестра тăнă. Вăл—хурçă плитасем туса кăлармалли çĕнĕ майсене тĕпчесе пĕлекенĕ.

Клехнер — Германин йывăр промышленноçне ертсе пыраканĕсенчен пĕри.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Рур облаçĕнче Гитлера хирĕçле юхăм хăватлăн сарăлса пырать. Çав юхăма союзниксен авиацийĕпе артиллерийĕ промышленноçа аркатса тăкнине пула ĕçсĕр юлассине ăнланса илнĕ рабочисем 7—8 миллион çынна яхăн хутшăннă.

Рурти производство малтанхи пекех стратегиллĕ чĕртавар çитменнипе пысăк йывăрлăхсем тӳсет. Çав чĕртавар чугун çулсем йĕркерен тухни пирки çитми пулнă. Швеципе Украина рудине сухатни пирки те производство 30—35 процент чакнă.

Нацистсем çакăн пек сас-хура сараççĕ: союзниксем Рур районне çĕмĕрсе кĕрес пулсан, çак мĕнпур анлă облăçа шыв айне путараççĕ пулать, союзниксен çарĕсене катастрофа тӳстерес тесе, пĕвесене татса янă чухне темĕнле «химиллĕ вăрттăн япаласемпе» усă кураççĕ пулать вара.

Венгрири лару-тăру

ХОРТИ РЕГЕНТА АРЕСТЛЕСЕ ГЕРМАНИЕ АСАТНĂ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс Тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Венгрин хальхи «премьер-министрĕ» Салаши (ăна Гитлер Венгрин пуканелле «правительстви» пуçне лартнă) хăйĕн влаçне ниепле те пурнăçа кĕртеймест. Салашине вĕлерме тапăннă тенĕ хыпар çӳрет. Венгри халăхĕ ытларах та ытларах хирĕç тăнине пусарма хăтланса, нимĕçсем пăшал чиксе çӳрекен çынсене тата «çынсене хăратакан хыпарсем сарса çӳрекенсене» пурне те вĕлерессипе хăратаççĕ.

Венгрин Швейцарири, Данири тата Турцири посланникĕсем тата Швецири ĕçсен поверенăйĕ пекех, Венгрин Лиссабонри миссийĕн членĕсем те Хортие пăхăнса тăма панă присягăна тепĕр хут çирĕплетсе панă.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио паракан хыпарсенчен çакă курăнса тăрать: Венгри регентне (правительне) Хортине арестлесе Германие ăсатнă. Будапештри радио Хорти регент Берлинри çинчен пĕлтернĕ.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио çапла пĕлтерет: Венгри хаçачĕсем хальхи вăхăтра, Германире Гитлер приказĕ тăрăх «фольксштурм» тунă пек, Венгрире те ополчени пухассишĕн кампани пуçласа янă.

Çав кампани ĕнтĕ Салаши «правительстви» Венгри çарĕ çине шанманнине, çавăнпа та вара хăраса ӳкнипе унăн ирĕксĕрех нимĕçсем тăвакан ĕçе тума лекнине çĕнĕрен çирĕплетсе парать.

САЛАШИНЕ ВĔЛЕРМЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Будапештран килнĕ хыпарсем тăрăх, Венгрин пуканелле «премьер-министрне» Салашине вĕлерме тапăннă.

Гиммлера вĕлерме тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германин шалти ĕçĕсен министрне тата Германин «шалти çарĕн» командующине Гиммлера Будапешт хулине çитсен вĕлерме тапăннă. Паллămар çын Гиммлера темиçе хут пенĕ. Гиммлер аманнă, ăна сыхлакан хуралăн пуçлăхĕ вилнĕ.

Гватемалăри событисем

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гватемалăра пăлхав пуçланнă. Ăна çамрăк офицерсемпе студентсем ертсе пыраççĕ. Арбен капитанран, Аран майортан тата граждăнсен представителĕнчен Ториэльборан тăракан триумвират çĕнĕ правительство туса хунă. Пăлхава президентăн хисеплĕ хуралĕнчи офицерсемпе салтаксем пуçласа янă. Çав хуралăн командирне Корадо генерала вĕлернĕ. Столицăра алла хĕçпăшал тытса кĕрешнĕ, вăл кĕрешӳ 12 сехете пынă. Пăлхав тăвакансем Понсе президентăн дворецне хупăрласа илнĕ, президент вара парăннă.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Килнĕ хыпарсем тăрăх, Гватемала президентне Понсене сирпĕнтерсе ярас ĕçе либералсен, студентсен тата рабочисен организацийĕсем тата çамрăк офицерсен ушкăнĕ организациленĕ. Çак офицерсем кăçалхи июль уйăхĕнче реакциллĕ диктатора Убикона сирпĕнтерсе янăччĕ.

Америкăри «Центрти демократиллĕ союзăн» председателĕ Винсенте Сайэнс çапла каланă: Гватемалăра пулса иртнĕ событисем питĕ паллă пулса тăраççĕ, вĕсем Гондурас, Сальвадор тата Никарагуа правительствисене сирпĕнтерсе антарас юхăма вăйлăлатĕç, тенĕ.

ЛАВАЛЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: октябрĕн 20-мĕшĕнче Марсельри трибунал Пьер Лавале, тăшмана пулăшнă тесе айăпласа, персе вĕлермелле тунă. Лаваль хăй судра пулман.

Черчилль Каирта пулни

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль Мускавран каялла таврăннă чухне Каир хулинче пĕр кун ирттернĕ. Унта вăл ертсе пыракан çар деятелĕсемпе калаçнă, вăл унта паха ыйтусем пирки калаçнă. Калаçусем пĕлтĕр Каирти конференци пулса иртнĕ çĕртех пулнă, вĕсем темиçе сехет хушши пынă. Калаçусене империн генеральнăй штабĕн начальникĕ Алан Брук фельдмаршал тата Британин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ Бернард Пейджет хутшăннă.

Черчилль Италие пыни

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: премьер-министр Черчилль тата империн генеральнăй штабĕн начальникĕ Алан Брук фельдмаршал Мускавран каялла таврăннă чухне Италире пĕр çĕр каçнă. Вĕсем союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Вильсон генерал патĕнче хăнара пулнă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ÇИНЧЕН ПĔЛӲ САРАС ЫЙТУПА НЬЮ-ЙОРКРА КОНФЕРЕНЦИ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра «Комодор» отделĕнче Совет Союзĕ çинчен пĕлӳ сарас тĕлĕшпе пĕр кунлăх конференци пулса иртнĕ. Конфеференцире 700 çынна яхăн пулнă, пуринчен ытла—çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен деятельсем.

Конференцин тĕллевĕ — Америка халăхне çутĕç учрежденийĕсем урлă Совет Союзĕ çинчен ытларах пĕлӳ парасси пулса тăрать.

Сиракуза хулинчи университетăн профессорĕ Уолш конференцире çапла пĕлтернĕ: Сиракуза университетĕнче Совет Союзĕ çинчен вĕренес тĕлĕшпе тăватă çуллăх курс уçнă. Ку курсра малтанхи икĕ çул хушшинче вырăс чĕлхипе вĕрентеççĕ. Вырăс чĕлхине вĕреннĕ студентсем вара вырăсла кĕнекесене вулама пултараççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери çутĕç институчĕн директорĕ Даггэн конференцире çапла пĕлтернĕ: вăрçă пĕтсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ пĕр-пĕрин патне профессорсем ямалла тăвасси çинчен пирĕн институт совет педагогĕсемпе калаçу пуçласа янă ĕнтĕ, тенĕ. Даггэн каланине конференцири халăх хĕпĕртесе алă çупса саламланă.

ТБИЛИСИ ХУЛИН ФУТБОЛ КОМАНДИ ИРАН ХУЛИСЕН ФУТБОЛ КОМАНДИПЕ ВЫЛЯНĂ

ТЕГЕРАН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кунта Тбилиси хулин сборнăй командипе Иран хулисен сборнăй команди футбол вăййи выляса илнĕ. Стадионра халăх туп-туллиех пулнă.

Тбилиси команди 5:1 шутпа çĕнтернĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ФИЛИППИН УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА АННĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: сентябрĕн 21-мĕшĕпе 22-мĕшĕнче Америка çарĕсем Каролин утравĕсен хĕвеланăç пайĕнчи Улути утравĕсене йышăнса илнĕ. Кунта американецсене хирĕç тăни пачах та пулман.

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернине парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен вăйĕсем пĕрле анлăн çыхăнса кĕрешнине пула, союзниксен çарĕсем Филиппин утравĕсен ушкăнĕнчи Лейте утравĕн хĕвелтухăç çыранне тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсен пысăк сухатусем пулман. Çарсем антарас умĕн сывлăшран питĕ нумай бомба пăрахнă тата карапсем вăйлă пенĕ. Союзниксен çĕр çинчи çарĕсем тытса илнĕ плацдарма аслăлатса пыраççĕ. Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: çав çарсене Японин пысăк çарĕ тăракан районра антарнă, Японин çав çарне Тераучи фельдмаршал ертсе пырать.

ТОКИО, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви, Японин император ставки пĕлтерни çине кăтартса, çапла пĕлтерет: Америка карапĕсем, çав шутра транспортсем те, октябрĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа Лейте утравĕн океан хĕрринчи районĕ çине персе тăраççĕ тата сывлăшран бомбăсем пăрахаççĕ. Америка çарĕсем Сулуан утравĕ çине аннă (Сулуан утравĕ вăл Филиппин утравĕсен варринче ларать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти халь уçăлнă электромеханически техникум çынсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет:

Техникумра икĕ отделени пур: кăнтăрлахи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахса вĕренмелле) тата каçхи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахмасăрах вĕренмелле).

Техникумра виçĕ çул çурă вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: 1) метала сивĕлле касса ĕçлекен техник-технологсене тата 2) электричествăллă аппаратсем тăвакан техник-электриксене.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ. 7-мĕш класран отличникпулса вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

9-мĕш класран вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

10-мĕш класран вĕренсе тухнисене хăйне уйрăм группăна илеççĕ, унта икĕ çул вĕренмелле.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, б) автобиографи тата в) паспорт (ăна техникума пырсан кăтартмалла).

Студентсене рабочисен нормипе снабжени параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Ытти хуласенчен килнисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Техникумăн каçхи отделенине те заявленисем йышăнаççĕ.

Заявленисене куллен ирхине 10 сехетпе 14 сехет хушшинче тата каçхине 18 сехетпе 21 сехет хушшинче техникум çуртĕнче йышăнаççĕ. Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

5—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00758 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.